

*Сăнÿкерчĕкре: Илпек Микулайĕ*

**Георгий КРАСНОВ**

# КАНТĂК УМĔНЧЕН УТСА ИРТНĔНЕХ ТУЙĂНАТЬ...

Илпек Микулайне эпĕ пĕрремĕш хут 1953-мĕш çулта курнăччĕ. Ун чухне эпĕ Çĕрпÿри ял хуçалăх техникумĕнче агронома вĕренеттĕм, эрнесерен тенĕ пекех Чăвашрадио редакцийĕсене çĕнĕ хыпарсем пĕлтерсе тăраттăм. Çуркуннехи пĕр кун Шупашкара, радиори редакторсемпе паллашма тесе, тĕп хулана кайса килем-ха терĕм. Анчах редакцисене кĕрсе курма хăюлăх ниепле те çитерейменрĕм, çавăнпа, пуçа усса сарлака картлашкаллă пусмапа анса урама тухас тесе, майĕпен аялалла анатăп... «Мĕн ачаллах çывăрса утатăн, такăнса ÿкетĕн вĕт капла», — илтех кайрăм сасартăк. Пуçа çĕклесе пăхатăп — мана хирĕç шакларах пуçлă, сайра çÿçлĕ, йăлтăр-ялтăр савăк куçлă çын хăпарать, аллине ман еннелле тăсать, кулкаласа çапла калать:

— Эсĕ мана палламастăн пулĕ-ха, эпĕ Илпек Микулайĕ, — терĕ вăл, эпĕ кам пулнине, Шупашкара мĕнле тĕллевпе килнине, шухăш-ĕмĕтĕме питĕ хăвăрт ыйтса пĕлчĕ. Васкаса калаçать те, ыйтăвĕсене аран хуравлама ĕлкĕретĕп.

— Заметкăсем çыратăн пулсан, эсĕ калавсем те çырма кирлĕ, — терĕ вăл. — Тĕрĕс калатăп-и? Йăнăшмарăм вĕт!

Эпĕ, чăнах та, çиччĕмĕш класра Н. Носов калавĕ тăрăх çырнă «Мишка пăтти» пĕчĕк пьесăна, ку таранччен никама та кăтартмансkерне, Шупашкара хампа пĕрле илсе килнĕччĕ. Пьесине, вырăсла вулама тата ăнланма вĕренес шухăшпа, чăвашла куçарса çырнăччĕ.

— Пьеса пур, — терĕм Илпек Микулайне, паллă писателе тĕл пулнăшăн хĕпĕртесе.

— Атя «Ялав» журнал редакцине, пьесуна унта вуласа пăхатăп, Шупашкара килнин усси çавă пултăр, — терĕ Илпек Микулайĕ.

Вăл мана çав сарлака пусмапах каялла ертсе хăпартрĕ те кукăрмакăр коридорсем тăрăх утса пĕчĕк зала кĕчĕ, ун урлă хыпаланса каçса пĕр алăка уçса ячĕ. Шалта икĕ çамрăк ларать, ал çырăвĕсем вулаççĕ ĕнтĕ. Илпек Микулайĕ тÿрех вĕсене манпа паллаштарчĕ:

— Ак, пулас писатале тупса кĕтĕм, пьесăсем çырать, калавсем те, — терĕ те вăл, ман еннелле аллине тăсрĕ, — пар-ха пьесуна, пăхкаласа тухам.

Эпĕ шăлавар кĕсйинчен варринчен хутлатнă тетраде туртса кăлартăм, Илпек Микулайĕ мĕн каласса чăтăмсăррăн кĕте пуçларăм. Акă тинех вăл пуçне çĕклерĕ те çапла каласа хучĕ:

— Эх, ачам, пăтта çиместпĕр эпир, пăтă çеç çиетпĕр, — тесе ал çырăвне каялла пачĕ, унтан пÿлĕмри яш-

сене куҫне хӗссе пӑхса илчӗ. — Ку — Александр Клементьев, Корея ҫинчен поэма пичетлесе кӑларчӗ, унпа юнашар лараканни Геннадий Пласкин, калавсем ҫырать. Шел, пьесӑсем ҫыракансем ҫук кунта паян, тепӗр чухне килсе кай, — алӑ тытсах сывпуллашса кӑларса ячӗ мана Илпек Микулайӗ.

«Тепӗр чухне» тени вӑрӑма кайрӗ маншӑн, мӗншӗн тесен «Ялав» журнала иккӗмӗш хут 61-мӗш ҫул вӗҫӗнче ҫеҫ ҫитсе кӗмелле пулчӗ. Эпӗ унта тӳрех икӗ материал чиксе пынӑччӗ. Хальхинче сӗтелсем хушшинче виҫҫӗн лараҫҫӗ. Пӗри тӑчӗ те мана алӑран тытрӗ, ӑшшӑн ҫапла каларӗ:

— Сана вунӑ ҫул каялла курнӑ пек астӑватӑп. Эпӗ Илпек Микулайӗ, вунӑ ҫул кӗтрӗмӗр эсӗ тутлӑ пӑтӑ пӗҫерсе килессе, ну мӗн унта санӑн кӗсйӳнте!

Илпек Микулайӗ мана халӗ та манман иккен, ку мана тӗлӗнтерсех ячӗ. Хушаматсене те астӑвать.

— Халӗ кунта Клементьевпа Пласкин ӗҫлемеҫҫӗ. Ак ку, хӗрлӗ питли, журналӑн яваплӑ секретарӗ Петӗр Львов, тепри, хӗрлӗ мӑйӑхли, журнал редакторӗ Георгий Ефимов, унӑн арӑмӗн, Чӑвашрадио дикторӗн Серафима Ефимован сасси кашни кунах Чукоткӑна ҫити янӑрать, — терӗ те вӑл иккӗшне те алӑ парса тухрӗ, мана та хӑвармарӗ.

Илпек Микулайӗ манӑн хутсене илчӗ те пӑхкалама пуҫларӗ.

— Эсӗ пьесуна Георгий Гигант тесе алӑ пуснӑ пек астӑватӑп. Лайӑх ят, янӑравлӑ! Халӗ Георгий Краснов тесе ҫыратӑн. Ма апла! Красновсем ахаль те иккӗн пирӗн, пиччӗшӗпе шӑллӗ, Аслипе Кӗҫӗнни. Тата... Мӗншӗн эсӗ ҫамрӑксен прози пирки ҫырнӑ статьюна «рецензи-репортаж» тетӗн! Мӗнле репортаж! Ӑнланмалла мар. Ак ку вара, «Пин кун салтак шинелӗпе» тесе ят пани, чӑнах та репортаж пекех вуланать. Маттур!

Ман материалсене редакторпа секретарь пӑхма-вулама пуҫларӗҫ. Вӗсем килӗшрӗҫ пулмалла хайхискерсене. «Рецензи-репортаж», — тенине илтменччӗ-ха, лайӑх ҫырнӑ, тепӗр номере яратпӑр», — терӗ Георгий Ефимов. «Пин кун салтак шинелӗпе» те журналшӑн ҫӗнӗ япала иккен, ӑна та ҫапма сӑмах пачӗҫ. Ҫапла майпа рецензи-репортажӗ чиперех пичетленсе тухрӗ «Ялавра». «Пин кун салтак шинелӗпе» репортаж вара телейлӗ пулаймарӗ. Наборларӗҫ ӑна, корректурине те вулаттарчӗҫ, анчах кайран журналта тухаймарӗ: цензорсем, ку япалана ҫар ыйтӑвӗпе ҫырнӑ тесе, йӗркеллӗ номертенех кӑларса пӑрахнӑ иккен. «Ан кулян, — терӗ мана Петӗр Львов, — тискер чӗр чунсен патши пулсан та ҫав цензорсене эпӗ нимӗн те тӑвайместӑп, ун вырӑнне тепӗр номере «Марине» калавна лартса ярӑп. Килӗшрӗмӗр-и»?

...Чипер-йӗркеллӗ пурӑннӑ пулсан, Илпек Микулайӗ кӑҫалхи майӑн 19-мӗшӗнче 85 ҫул тултаратчӗ. Ырӑ кӑмӑллӑ, ҫамрӑк литераторсене яланах пулӑшма хатӗрскер, ӗҫре вӑл яланах вӗткеленсе ҫӳретчӗ. Пухусенче пӗринче те калаҫмасӑр юлмастчӗ. Питӗ лайӑх тема пурччӗ унӑн сӑмах илме, вӗрентме. «Ҫамрӑксен ҫакна манма юрамасть: чӑвашла эпир «Ларма тӑма пӗлместпӗр», — тесе ҫыратпӑр ялан. Ку тӗрӗс мар, «Лара-тӑра пӗлместпӗр», — тесе ҫырмалла. Е «Кулма пуҫламастпӑр эпир, кула пуҫлатпӑр», — тетчӗ вӑл писательсен пухӑвӗсенче. Ҫавӑн пек сӑмах ҫаврӑнӑшӗсене кӗскен ҫыртарасшӑнччӗ вӑл, анчах ҫыравҫӑсем Илпек Микулайне итлесех каймастчӗҫ, «Кулма пуҫламастпӑр», — тесех ҫыратчӗҫ, хӑй те ҫав формӑпах усӑ куратчӗ вара...

Писательсен X съездӗнче мана, писательсенчен чи ҫамрӑккине, союз правленийӗн яваплӑ секретарьне суйласа лартрӗҫ, председательне — Николай Дедушкина. Литература консультанчӗ пулса Илпек Микулайӗ ӗҫлетчӗ. Пӗр пӳлӗмрех ларattӑмӑр эпир. Иккӗмӗш консультанчӗ Алексей Воробьевчӗ. Ӗҫе ирех пыраттӑм эпӗ, анчах Илпек Микулайӗ унта манран та маларах ҫитетчӗ, сӗтелӗ хушшинче хӑй кашнинчех ҫукчӗ, куҫлӑхӗ

кӑна питӗ йӗркеллӗн выртатчӗ. Пӗррехинче Николай Степанович Дедушкин: «Кала-ха, халех кӗтӗр ман пата Илпек Микулайӗ», — терӗ. Николай Филиппович шӑпах васкаса ҫитсе кӗчӗ, куҫлӑхне сӗтел ҫинчен илсе кӑкӑр умӗнчи кӗсйине чикрӗ. Иксӗмӗр те кӗтӗмӗр председатель пӳлӗмне. «Ӑҫта хӑварнӑ паян куҫлӑха, шыраса таҫта та ҫитрӗм, ниепле те тупаймарӑм. Эсир ирӗк парсан халех тепӗр хут тухса каятӑп ӑна шырама», — тӳрре тухма тӑрӑшать Илпек Микулайӗ паҫӑр, председатель тӗрӗсленӗ чухне, ӗҫ вырӑнӗнче пулманскер. Николай Степанович ӑна пӑхрӗ-пӑхрӗ те ахӑлтатса кулса ячӗ: «Куҫлӑху кӑкӑр умӗнчи кӗсйӳнте выртать-ҫке, ҫавна та сисместӗн-и. Урӑх ан ҫухат, шырама та ниҫта та ямастӑп», — терӗ Дедушкин. «Тавтапуҫ куҫлӑха тупса панӑшӑн, урӑх ҫухатмастӑп», — хуравларӗ Илпек Микулайӗ, нимӗн пулман пекех аллине чӑмӑртаса.

Кӑмӑллӑ ҫынччӗ Николай Филиппович Илпек. Вӑл кама та пулин ҫилленнине е кампа та пулин ятлаҫнине нихҫан та курман эпӗ. Шӳтлесе тавлашнисем пулкаланӑ. Вӑл вӑхӑтра хула ӗҫтӑвкомне пӑхӑнса тӑракан «Ремстройтреста» Михаил Исаакович Гендельман ертсе пыратчӗ. Илпек унпа пӗр ҫуртра кӳршӗлле пурӑнатчӗ. «Гендельман еврей пулин те чӑвашла питӗ аван калаҫать, ӗненместӗр-и!» — тесе хучӗ пӗррехинче Илпек Микулайӗ. Алексей Воробьев ӗненмерӗ. Эпӗ те ӗненмерӗм: «Чӑвашсем чӑвашла калаҫма манаҫҫӗ те, ку, еврей ҫынни, епле майпа чӑвашла пӗлет-ха!» «Санпа вӑл чӑвашла калаҫсан, мана паянах 150 грамм ӗҫтеретӗн», — терӗ Илпек Микулайӗ. Килӗшрӗмӗр. Николай Филиппович телефон трубкине ҫӗклерӗ те такампа чӑвашла калаҫма пуҫларӗ, унтан трубкӑна мана тыттарчӗ: «Калаҫ, телефон умӗнче Гендельман», — терӗ. Эпӗ чӑнах та Михаил Исааковичпа чӑвашла калаҫма тытӑнтӑм. Чиперех тухаҫҫӗ унӑн чӑваш сӑмахӗсем. Тӗленнине те пытармарӑм эпӗ. «Ман ремстройтрестра ӗҫлекенсенчен 90 процентӗ — чӑвашсем. Эпӗ чӑвашла пӗлмесен, мана вӗсем ыранах 100 тенкӗлле сутса яраҫҫӗ», — терӗ Гендельман чӑн чӑвашла. Ҫапла выляса ятӑм эпӗ Илпек Микулайне 150 грамм...

Илпек Микулайӗ районсене тухса ҫӳреме питӗ юрататчӗ. Ун чухне эпир кашни районта тенӗ пекех литература эрнисем ирттереттӗмӗр. Сӗнтӗрвӑрри, Тӑвай, Ҫӗрпӳ тата ытти районсенче ирттернӗ эрнесене кашнинех Илпек Микулайӗ те хаваслансах хутшӑнатчӗ. Вулакансем умӗнче вӑл питӗ хӗрӳленсе калаҫатчӗ. Юратса итлетчӗҫ ӑна ял ҫыннисем, хисеплетчӗҫ халӑх писательне, «Хура ҫӑкӑр» романӗн геройӗсем ҫинчен кӑсӑкланса ыйтса пӗлетчӗҫ. Илпек Микулайӗ вара хӑй Митта Ваҫлейӗпе тата Сталинград патӗнче фашистсемпе паттӑррӑн ҫапӑҫса пуҫне хунӑ Владимир Бараевпа пӗрле Чӑвашрадиора мӗнле ӗҫлени ҫинчен каласа пама юрататчӗ. Кайран вӑл Бараев ҫинчен «Тимӗр» ятлӑ роман та ҫырса кӑларчӗ.

Вӑл пирӗнтен уйрӑлса кайиччен эпӗ Илпек Микулайӗпе пӗр ҫуртрах пурӑнтӑм. Пенсие тухнӑ пулсан та, килӗнче ларма юратмастчӗ вӑл, ирех тӑрса урамра уҫӑ сывлӑшра уҫӑлса ҫӳреме кӑмӑллатчӗ, ялтан килнӗ ҫынсемпе паллашса вӗсемпе тӑван пек ӑшшӑн калаҫатчӗ, ял пурнӑҫӗ ҫинчен ыйта-ыйта пӗлетчӗ. Ҫав вӑхӑтра вӑл учительсем ҫинчен драма ҫырас ӗмӗтпе хавхаланса пурӑнатчӗ. Чӑваш академи драма театрӗнче «Хура ҫӑкӑр» романӗ тӑрӑх лартнӑ драми питӗ ӑнӑҫлӑн пыратчӗ те, учительсем ҫинчен чаплӑ пьеса ҫырса пӗтеретӗп тетчӗ. Шел, пӗтереймерӗ, вӑхӑтсӑр, утмӑлтан иртсенех пирӗнтен уйрӑлса кайрӗ...

Халӗ те эпӗ ир-ирех тӑрса кантӑкран пӑхсан картишӗнче пӗр-пӗр арҫын уҫӑлса ҫӳренине куратӑп та кантӑк умӗнчен Илпек Микулайӗ утса иртнӗнех туйӑнать...